# Ултă чĕр чуна таптанă...

**_Чăваш Республикин Чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вĕсем пурăнакан вырăнсене сыхлас, тĕрĕслес тата чĕрĕлĕхпе усă курассине йĕркелес енĕпе ĕçлекен патшалăх службинче /ăна кĕскен Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх служби теççĕ/ 28 çын вăй хурать. Çав шутран 24-шне административлă право йĕркине пăснăшăн протокол çырма ирĕк панă. Служба ĕçченĕсен аллинче автомобильпе юр ашан 8-шар, моторлă пĕчĕк 3 кимĕ. Автотранспорт кивĕ, час-часах çĕмĕрĕлет. Пĕлтĕр республика хыснинчен уйăрнă укçапа УАЗ автомашина 2 туянтăмăр._**

Республикăра 1512,3 пин гектар сунар вырăнĕ шутланать. Тара илнисене çирĕплетсе пани – 911,1 пин /60,2%/ гектар. Ăна 35 лаптăка пайланă. Вĕсенче юридици сăпачĕпе уйрăм çынсен 15 тытăмĕ хуçаланать. Танлаштарма: 2011 çул вĕçĕнче çирĕплетсе пани 1063,7 пин гектарччĕ, 43 лаптăка пайланăччĕ. Вĕсем 22 тытăм аллинччĕ.

Сунар вырăнĕсене темиçе çул каялла федераци саккунне пăсса валеçни пирки ЧР Арбитраж сучĕ Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх службин вĕсен хуçисемпе çирĕплетнĕ килĕшусен пысăкрах пайне пăрахăçланине «Хыпар» пĕлтернĕччĕ. Тĕрĕсем çывăх вăхăтра сунар лаптăкĕсене туртса илессипе çыхăннă тата 8 ĕçе пăхĕç. Каярахпа вĕсене çĕнĕрен пайласа парăпăр. Çапах та мĕн пур сунарçă усă курма пултаракан вырăн хушăнассине халех пĕлтерес килет.

Иртнĕ çулхи раштавăн 1-мĕшĕ тĕлне федерацин сунар хуçалăхĕн реестрĕнче Чăваш Енри 11978 кайăкçă çинчен çырса хуни пур. Пурне те сунарçă билечĕ панă. Пĕлтĕр тĕрлĕ кайăк тытма ирĕк илнĕ çынсене 5450 лицензи тивнĕ. Вĕсем пушă вăхăта кашни кайăкçă кĕрсе çÿреме пултаракан вырăнта иртернĕ. Пăшипе хир сыснине тытма Раççей Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин хушăвĕпе килĕшÿллĕн ирĕк панă. Республика Пуçлăхĕн 2012 çулхи утă уйăхĕнчи «Чăваш Республикин территорийĕнче сунар ресурсĕсене тытмалли лимитсемпе квотăсем çинчен» Указĕпе килĕшÿллĕн кăçалхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен 28 пăшипе 93 хир сыснине тытма ирĕк паратпăр. Ку маларахри сунар тапхăрĕнчи шайран пĕчĕкрех. Сăлтавне Раççей Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви сунар ресурсĕпе усă курмалли норматива улшăну кĕртнипе те, хăш-пĕр сунар вырăнĕн хуçи Арбитраж сучĕ лаптăксене туртса илме йышăнассине малтанах пĕлсе тăрса чĕр чун тытма ыйту тăратманнипе те ăнлантармалла. Лицензисен 30% кашкăрсене 2011 çулта пĕтерме хутшăннă сунарçăсем, 70% ытти кайăкçă тивĕçрĕç. Сунар билечĕ, лицензи парасси пирки çынсенчен пĕр ăсхав та илмен.

Служба юридици сăпачĕсемпе уйрăм предпринимательсем чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вĕсем пурăнакан вырăнсене сыхласси, тĕрĕслесси тата чĕрĕлĕхпе усă курассине йĕркелесси çинчен калакан саккуна мĕнлерех пăхăннине палăртас тĕллевпе 11 тĕрĕслев, сунар ĕç-хĕлĕ, çынсене кайăкçă лаптăкĕпе усă курма ирĕк парасси çинчен калакан саккуна еплерех шута илнине уçăмлатас йÿтĕмпе 1786 рейд ирттертĕмĕр. Йĕркене пăснă 140 тĕслĕхе /2011ç. – 117/ тăрă шыв çине кăлартăмăр. Следстви органĕсен умне уголовлă ĕç пуçарма 6 ыйту лартрăмăр. Иртнĕ çул саккуна пăхăнманшăн юридицин 4 тытăмне, должносри 8 çынна тата уйрăм 103 çынна административлă майпа айăплама йышăну кăлартăмăр. Уйрăммăн илсен пурĕ 148 пин тенкĕлĕх /2011 ç. – 143 пин тенкĕлĕх/ штраф хунине, унсăр пуçне саккуна пăсса сунар йĕркелесе тăкак кăтартнăшăн 78 пин тенкĕлĕх штрафланине палăртас килет.

Право йĕркине пăхăнман çынсенчен чĕр чун тытмалли 21 хатĕр, çав шутра 11 пăшал, вăхăтлăха туртса илтĕмĕр. Суд йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн 3-шне тавăрса памарăмăр.

Служба Йĕпреç районĕнчи Пăкăян, Çĕмĕрле районĕнчи Кăмаша саккаслăхĕсенче кашкăр нормативра палăртнинчен ытларах хунанă пирки – 1, Вăрнар, Етĕрне, Муркаш, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Çĕрпÿ, Вăрмар районĕсенче тилĕ йышне шайлаштарас тĕллевпе 8 йышăну кăларчĕ. Çапла вара саккаслăхсенче тукмак хÿре пĕтерекен чĕр чуна ĕрчеме лайăхрах май турăмăр, районсенче уртаракан чир сăлтавне малтанах пĕтерме тăрăшрăмăр. Пурĕ кашкăрпа тилле «капкăна» çаклатма 65 çынна лицензи панă. 49 хĕрлемесе «серепене» лектернĕ.

2012 çулта республикăри çулсем çинче автотранспорт 3 хир сыснине, 2 пăшие, 1 хир качакине пырса тăрăнтарнă. 6-шĕ те вилнĕ /2011ç. 5 пăшипе 3 хир сыснин пурнăçне татнă/. Пирĕн инспекторсем суда 161 пин тенкĕ шыраса илме 10 тавăç тăратнă. Хальлĕхе 33 пин тенкĕлĕх тăкака саплаштарнă. Ыттине те шыраса илессишĕн тăрăшатпăр.

Вăрман, уй-хир чĕр чунĕ уртаракан чир ан сартăр тесе пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче вĕсем пурăнакан лаптăксенче амак вирусĕпе кĕрешмелли 25 пин эмел хурса тухрăмăр. Ăна çисен чĕр чун организмĕнче уртаракан чир çултаlăк ытла вăй илеймест. Кунсăр пуçне хир сыснине Африка мурĕ ан ертĕр тесе тивĕçлĕ ĕç пурнăçлатпăр. Вилнине лабораторире тĕрĕслеттеретпĕр. Республикăра çак чĕр чун Африка амакĕпе чирленине çирĕплетмен.

■ **Владимир КУЗЮКОВ,**
**ЧР Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх службин ертÿçи**